# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

Муркаш район хаҫачӗ

1944 ҫулхи майӑн 5-мӗшӗнчепе тухать

28 (7453) № ✻ Шӑмат кун, 2007 ҫулхи апрелӗн (ака) 7-мӗшӗ ✻ Хакӗ ирӗклӗ


## Апрелӗн 8-мӗшӗ – Мӑнкун уявӗ

**ХИСЕПЛӖ ЕНТЕШСЕМ!**

Сире пурне те Мӑнкун ячӗпе саламлатӑп. Ҫак кун Христос тӗнне ӗненекенсемшӗн чи пысӑк праҫник шутланать. Христос чӗрӗлсе тӑнӑ кун ҫуркунне килни пире пурнӑҫра ытларах ырӑ ӗҫсем тума, пӗр-пӗрне ӑнланса, пӗр-пӗринпе килӗштерсе вӑй хума хавхалантарать. Йывӑрлӑхра пӗр-пӗрне пулӑшмаллине аса илтерсе тӑрать. Пысӑк ӗҫе ӗлӗкренех чӑвашсем пӗрле пуҫтарӑнса тунӑ. Ниме йӗркипех районта юлашки ҫулсенче чиркӳсене ҫӗнетсе ҫӗнӗрен хута ятӑмӑр. Муркашра та халӑх вӑйӗпех кӗлӗ ҫуртне хӑпартрӑмӑр. Ҫак утӑмсем пире пурне те малашне ырӑпа усала уйӑрма пулӑшчӑр, татах та ырӑ ӗҫсем тума хавхалантарччӑр. Кӑҫал Ача ҫулталӑкӗ пулнӑ май ҫитӗнекен ӑрӑва ҫак таса туйӑмсене ӑша хывса ӳстермеллине уйрӑмах асра тытасчӗ. Кашниех хӑйӗн ӗҫ вырӑнӗнче тӳрӗ кӑмӑлпа тата хастар вӑй хурсан, пирӗн пурнӑҫ татах та лайӑхланӗ. Ун чухне ачасен пуласлӑхӗ те уҫӑмлӑрах пулӗ. Тӑван тавралӑхӑмӑр та кунран-кун хитреленӗ, пуянланӗ.

Ҫурхи кунсем пурне те ӗмӗтленнине пурнӑҫа кӗртме хавхалантарччӑр. Районӑмӑр кунран-кун чечеклентӗр, ҫӗклентӗр тесе малалла та пӗр шухӑшкӑмӑлпа ӗҫлесчӗ. Пурне те ҫирӗп сывлӑх, телей, ӑнӑҫу, вӑрӑм кун-ҫул сунатӑп. Сирӗн чун ӑшши нихӑҫан та ан иксӗлтӗрччӗ, пӗр-пӗрне ырӑ тума кӑмӑл та пултӑр, вӑхӑт та тупӑнтӑр, мӗншӗн тесен пӗрле чухне кирек епле чӑрмава та, йывӑрлӑха та ҫӗнтерме пулать. Турӑ сире инкек-синкекрен сыхлатӑр, сирӗн, ачӑрсен пурнӑҫ ҫулне уҫса пытӑр.

**Район пуҫлӑхӗ Ю. ИВАНОВ.**

**ХАКЛӐ ЕНТЕШСЕМ,<br>ПРАВОСЛАВИ ХРИСТИАНӖСЕМ!**

Сире Мӑнкун ячӗпе ӑшшӑн тата чӗререн саламлатӑп!

Пӗтӗм православи тӗнчишӗн ҫак кун телей тата ҫӗнӗ пурнӑҫ ҫуралассин уявӗ пулса тӑрать. Вӑл пире ӗмӗрхи ӑс-хакӑл хаклӑхӗсем пирки ҫӗнӗрен шухӑшласа пӑхма хистет. Православи ӗненӗвӗ халӑха ӑс-хакӑл пахалӑхӗсене парнелет, вӗсем вара пӗтӗм халӑхӑн чӑн пуянлӑхӗ пулса тӑраҫҫӗ. Юрату, чун ӑшши, тӗрӗслӗх, чӑтӑмлӑх – вӗсемсӗр пирӗн тӗнче те тытӑнса тӑма пултараймасть.

Ҫак моральпе этика нормисем – пирӗн пулас ӑрӑва воспитани памалли тӗп тытӑм. Пирӗн хамӑрӑн ӑшӑ кӑмӑллӑрах, ӑслӑ-тӑнлӑрах пулмалла, пӗр-пӗрне ӑнланма пӗлмелле. Кунпа пӗрлех ҫакна хамӑрӑн ачасене вӗрентес пулать.

Сире эпӗ, православи христианӗсене, телей, ӑнӑҫу, сывлӑх, кӑмӑл лӑпкӑлӑхӗ, ҫутӑ шанӑҫ, ӗненӳ тата юрату сунатӑп.

**Раҫҫей Федерацийӗн Патшалӑх Думин депутачӗ, «Пӗрлӗхлӗ Раҫҫей» («Единая Россия») фракци членӗ П. СЕМЕНОВ.**

## Ырӑ хыпар

# Районта пенсисем вӑтамран 161 тенкӗ те 42 пус ӳснӗ

Раҫҫей Федерацийӗн правительствин 2007 ҫулхи мартӑн 27-мӗшӗнчи 181 № йышӑнӑвӗпе апрелӗн 1-мӗшӗнчен ӗҫ пенсийӗн тӗп пайӗ 7,5 процент, страхланӑ пайӗ 9,2 процент ӳсрӗҫ. Патшалӑх пенсийӗн виҫисем те 7,5 процент чухлӗ пысӑкланчӗҫ.

Паллах, ҫак улшӑнусем пирӗн районти тивӗҫлӗ канӑва тухнӑ ватӑсене те пырса тивеҫҫӗ. Апрелӗн 1-мӗшӗ тӗлне районта 10318 пенсионер пулнӑ.

Ӗҫ пенсийӗн вӑтам виҫи апрельччен 2317 тенкӗ те 13 пус шутланнӑ. Хӑпартнӑ хыҫҫӑн вӑл 2509 тенкӗ те 67 пуспа танлашнӑ. Ҫапла вара пенси 192 тенкӗ те 54 пус чухлӗ ӳснӗ.

Ӗҫ пенсийӗсене илсен вӗсем ҫапла хӑпарнӑ:

– инвалидноҫпа паракан ӗҫ пенсийӗн вӑтам виҫи 1793 тенкӗ те 28 пусран 1939 тенкӗ те 69 пуса ҫити ӳснӗ – 146 тенкӗ те 41 пус чухлӗ хӑпарнӑ;

– ҫемьене тӑрантаракана ҫухатнипе паракан ӗҫ пенсийӗн вӑтам виҫи 1337 тенкӗ те 80 пусран 1452 тенке ҫити ӳснӗ – 144 тенкӗ те 20 пус чухлӗ пысӑкланнӑ;

– ватлӑхпа паракан ӗҫ пенсийӗн вӑтам виҫи 2459 тенкӗ те 46 пусран 2663 тенкӗ те 80 пуса ҫити хӑпарнӑ – 204 тенкӗ те 34 пус чухлӗ ӳснӗ.

Патшалӑх пенсийӗсем вӑтамран 136 тенкӗ те 25 пус хӑпарнӑ, 1826 тенкӗ те 17 пусран 1962 тенкӗ те 42 пуса ҫитнӗ.

Вӑтамран илсен, мӗн пур пенсисен виҫи районта 161 тенкӗ те 42 пус чухлӗ ӳснӗ.

**И. СЕМЕНОВА,**
**РФ пенси фончӗн районти уйрӑмӗн пенсисене палӑртас, шутласа парас тата тӳлес енӗпе ӗҫлекен пайӗн ертӳҫи.**

## Уйӑхлӑх

# Тасалӑхпа тирпейлӗх хамӑршӑнах

Ҫуркунне юр кайса пӗтнӗ май эпир хӗл кунӗсенче тавралӑх тирпей-илемӗшӗн епле тӑрӑшни питӗ аван куҫ умне тухса тӑрать. Хӗл каҫа пуҫтарӑннӑ ҫӳп-ҫап тата ытти тасамарлӑх ҫиеле тухать. Ҫавна май нумаях пулмасть «Пӗрлӗхлӗ Раҫҫей» («Единая Россия») политика партийӗн Чӑваш Енри уйрӑмӗ 2007 ҫулхи мартӑн 30-мӗшӗнчен пуҫласа апрелӗн 30-мӗшӗччен кил-ҫурт таврашне, урамсен, парксен, скверсен, ача-пӑча вылямалли тата спорт вӑййисем ирттермелли вырӑнсен территорийӗсене тирпей-илем кӗртес тата юсас, йывӑҫсемпе тӗмсем лартас енӗпе уйӑхлӑх ирттерме чӗнсе каласа ырӑ пуҫару турӗ. Ҫак кунсенче районти предприятисемпе организацисенче, учрежденисенче ӗҫлекенсем субботника хастар хутшӑнчӗҫ.



Район центрӗнче, районти ялсенче пурӑнакансенчен чылайӑшӗ ҫак пархатарлӑ ӗҫе кӑмӑл хушнипе хутшӑнма кӑмӑл турӗ. Апла пулин те хӑшӗсем ҫак ӗҫ хӑйсемшӗн мар тесе шутлаҫҫӗ пулас. Уйрӑм ҫуртсен хуҫисенчен ытларахӑшӗ хӑйсен ҫурчӗ йӗри-тавра территорие тасатса тирпейлеме тӑрӑшать пулсан, нумай хватерлӗ ҫуртсенче пурӑнакансем пирки ҫак сӑмахсене калама ҫук. Тасатмалли, тирпейлемелли, ҫуртсем таврашӗнче хӑт кӗртмелли сахал мар.

Кашни предприятие организаци ертӳҫи хӑйсене ҫирӗплетсе панӑ территорине кирлӗ шайра тытса тӑмалли пирки пӗлет. Кунсерен унти тасамарлӑха вӗсем курса тӑраҫҫӗ. Анчах та ӑна тирпейлесси пирки васкамаҫҫӗ.

Ҫурхи кунсем ҫитнӗ май каҫсерен урамсенче уҫӑлса ҫӳрекен яшсемпе хӗрсем те сахал мар. Вӗсем хыҫҫӑн та тепӗр чухне тӗрлӗ тасамарлӑх, пуш кӗленчесемпе банкӑсем, пакетсемпе апат-ҫимӗҫ юлашкисем сахал мар юлаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та ку енӗпе дежурствӑра тӑракан милици сотрудникӗсен те тимлӗрех пулмалла, тавралӑха варалакансенчен ҫирӗпрех ыйтмалла.

Тирпей-илем кӗртмелли, тасатмалли район центрӗнчи уйрӑм предпринимательсен предприятийӗсем, магазинӗсем таврашӗнче, Муркаш райповӗн магазинӗсем ҫывӑхӗнче те ҫук мар. Ҫавӑнпа та тасалӑхпа тирпейлӗхшӗн пурин те ҫине тӑрасчӗ. Тавралӑх илемӗ, тирпейлӗхӗ хамӑршӑнах вӗт-ха.

**Хамӑр инф.**

**Сӑн ӳкерчӗкре: Муркашри пурӑнмалли ҫурт-йӗрпе коммуналлӑ хуҫалӑх муниципаллӑ предприяти ӗҫченӗсем тасалӑхпа тирпейлӗх хуралӗнче.**

## Саккун ҫирӗп ыйтать

# Пулӑҫсене пӗлме

Кӗҫех пӗвесемпе кӳлӗсем пӑртан тасалӗҫ. Пулӑҫсем вара шыв хӗрринерех туртӑнӗҫ. Анчах та пур ҫӗрте те пулӑ тытма юрать-и-ха? Ҫук иккен. Ҫавӑнпа та йӗркене пӑснӑ тӗслӗхсем ан пулччӑр тесе пулӑ тытма юраман вырӑна палӑртатпӑр. Акӑ, Шупашкарти ГЭС плотининчен 4 километр анатарах тата 500 метр ҫӳлерех пӗр ҫулталӑк хушши пулӑ тытма юрамасть. Ҫак йӗркене пурне те (физически, юридически лицосене) ҫирӗп пӑхӑнма ыйтатпӑр. Йӗркене мӗнле пурнӑҫланине вара Шупашкарти районсем хушшинчи ҫут ҫанталӑка сыхлакан прокуратура, шалти ӗҫсен пайӗсем, ҫавӑн пекех ҫут ҫанталӑка сыхлакан органсене тӗрӗслесе тӑракансем ҫирӗп контроллесе тӑраҫҫӗ. Чӑваш Республикинче ку енӗпе яваплӑ ӗҫченсем йӗркесӗрлӗхе сирес тӗлӗшпе ятарлӑ рейдсем ирттерме палӑртаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та пулӑҫсене саккуна пӑхӑнма ыйтас килет.

**Д. ПЛАТОНОВ,**
**Шупашкарти районсем хушшинчи ҫут ҫанталӑка сыхлакан прокуратурин прокурорӑн аслӑ пулӑшаканӗ.**

## Тӗп редакторсен кунӗнчен

# Паянхи Канаш – таса хула

Апрелӗн 5-мӗшӗнче Канаш хулинче ЧР культура министрӗ Петр Краснов ертсе пынипе Тӗп редакторсен кунӗ пулчӗ. Республикӑри канашлура информаципе тивӗҫтерес ӗҫе анлӑлатас, хаҫатсен полиграфи пахалӑхне лайӑхлатас ыйтусене сӳтсе яврӗҫ.

Канаш хулине Тӗп редакторсен кунне ирттерме ӑнсӑртран суйласа илмен. Хула юлашки ҫулсенче ӳсӗмлӗ аталанать. Ҫӗнӗ ҫуртсем ҫӗкленеҫҫӗ. Паянхи Канаш – таса та тирпейлӗ хула.

– Эпир хаҫатпа туслӑ ҫыхӑну тытатпӑр, – терӗ хула администрацийӗн пуҫлӑхӗ Валентина Полукарова. “Хаҫат халӑх патне информаци ҫитермелли хатӗр пулнӑран эпир редакципе килӗштерсе ӗҫлеме ҫӗнӗ майсем шыратпӑр”, – терӗ район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Владислав Софронов.

Петр Краснов министр район хаҫачӗсене республика бюджетӗнчен укҫа-тенкӗпе пулӑшнине тишкерчӗ. Редакцисем укҫа-тенкӗ ытларах ӗҫлесе илме пуҫланине палӑртрӗ. Ӗҫ укҫи тӳлес ыйтӑва та пӑхса тухрӗҫ.

Райхаҫатсен тиражӗ иртнӗ ҫырӑнтару тапхӑрӗнче 3 процент ӳснӗ. Тиражсене палӑрмаллах ӳстерме майсем шырамалла. Хаҫатсен полиграфи пахалӑхне ӳстермелле. Вӗсене тӗспе кӑларасси пирки шухӑшламалла.

Министр ҫумӗ Олег Петров хаҫатсен ӗҫне ҫӗнӗлле йӗркелес, ЧР Президент администрацийӗн информаци управлени ертӳҫи Марина Кузьмина влаҫпа хаҫатсем ҫыхӑнса ӗҫлес ыйтусене тишкерчӗҫ.

**Хамӑр инф.**

## Ял хуҫалӑх ыйтӑвӗсемпе

# Ҫиелтен пӑхма юрамасть

***Ҫуркунне ҫитрӗ. Ҫут ҫанталӑк чӗрӗлнипе пӗрле ял ӗҫченӗн чун-чӗри те канлӗхе ҫухатать. Тӗрӗссипе, хӗл кунӗсенче те вӑл лӑпкӑлӑх мӗнне пӗлмест. Обществӑлла выльӑх-чӗрлӗхе хӗл каҫармалли тапхӑрта ял ҫынни туса ҫитерейменни ӗҫ тӳрех курӑнать. Пӗлтӗрхи йӑнӑша тӑвас мар тесен, кӑҫал мӗне ытларах тимлӗх уйӑрмалла? Ҫур акине вӑхӑтра тата пахалӑхлӑ ирттерессипе ҫыхӑннӑ ытти вуншар ыйту канӑҫ памасть ҫӗр ӗҫченне. Район администрацийӗн пуҫлӑхӗн пӗрремӗш ҫумӗнчен А. Н. ИВАНОВРАН шӑпах ҫав ыйтусене тӗплӗнрех ҫутатса пама ыйтрӑм та. Калаҫу пуҫламӑшӗнче вара Альберт Николаевичран районӑн экономикӑпа социаллӑ аталанӑвӗ ҫинче чарӑнса тӑма ыйтрӑм.***

– Пирӗн район малалла ҫирӗп аталанса пырать. Эпир республика ҫитӗнӗвӗнче курӑмлӑ вырӑн йышӑнатпӑр. Ял хуҫалӑх ҫӗрӗсем, ял ҫыннисеннипе шутласан, пурӗ 61783 гектар чухлӗ. Пирӗнтен пысӑкрах лаптӑклисем 4 район. Ял хуҫалӑх продукчӗсене туса илессипе эпир ыттисенчен тухӑҫлӑрах ӗҫлеме тӑрӑшни яр уҫҫӑнах курӑнать. Иртнӗ ҫул, акӑ, сӗт пӗтӗмпе 45867 тонна туса илтӗмӗр, ҫав шутран 12495 тоннине – ял хуҫалӑх предприятийӗсенче. Ку кӑтарту республикӑра чи пысӑкки пулчӗ. Ҫапла майпа республикӑра туса илекен сӗтӗн 10,64 процентне пирӗн район туса илнӗ.

Аш-какай туса илессипе те пӗлтӗр пирӗнтен Шупашкар районӗ ҫеҫ иртсе кайрӗ. Эпир пӗтӗмпе 7469 (ял хуҫалӑх предприятийӗсенче – 2825) тонна туса илтӗмӗр. Ку вӑл республикӑра туса илнӗ пӗтӗм ашӑн 7,97 проценчӗ.

Иртнӗ ҫул тӗш тырӑпа пӑрҫа йышши культурӑсене 25763 (23879) тонна ҫитӗнтерсе илтӗмӗр. Урӑхла каласан, республикӑра туса илнӗ тыр-пулӑн 6,2 процентне Муркашсем туса илчӗҫ. Пирӗнтен ытларах туса илекенсем 5 район. 21 район хушшинче япӑх мар ку. Ҫӗр лаптӑкӗпе эпир 5-мӗш вырӑнта пулнине шута илсен, пушшех те.

Чӑваш Енте ҫитӗнтернӗ “иккӗмӗш ҫӑкӑрӑн” 10,4 процентне Муркашсем туса илтӗмӗр. Хӑш район мӗн чухлӗ тӳпе хывнине шута илсен, ку 4-мӗш кӑтарту.

Ҫапла майпа пӗлтӗр ял хуҫалӑх продукчӗсене 1156,6 млн. тенкӗлӗх туса илтӗмӗр. Ку вӑл республикӑри виҫҫӗмӗш кӑтарту. Пирӗн тӳпе республикӑри ҫак кӑтартура 7,34 процентпа танлашать. **(Вӗҫӗ 5-мӗш стр.).**

## Юбилей

### Саламлатпӑр



Пӑсӑрман ялӗнче пурӑнакан **Владимир Афанасьевичпа Валентина Михайловна МАКСИМОВСЕНЕ** ҫуралнӑ кунӗсем ячӗпе чун-чӗререн саламлатпӑр. Аннеҫӗм, аттеҫӗм, кукамай, кукаҫи, ӗмӗрӳсем вӑрӑм пулччӑр. Сывлӑхусем ан хавшаччӑр. Ачусен, мӑнукусен юратӑвӗ сирӗн ватлӑха илем кӳччӗр. Лӑпкӑн, ҫирӗп сывлӑхпа нумай-нумай ҫул пурӑнӑр.

Эпир сире пурте ҫав тери юрататпӑр.

**Хӗрӗсемпе кӗрӳшӗсем, 12 мӑнукӗ, тӑванӗсем.**



Тӑмкасси ялӗнче пурӑнакан **Любовь Емельяновнапа Владимир Васильевич ВАСИЛЬЕВСЕНЕ** ҫуралнӑ кунӗсем ячӗпе саламлатпӑр. Владимир Васильевич ака уйӑхӗн 10-мӗшӗнче 70 ҫул тултарать. Вӑл мӗн ҫамрӑкранпа пенси ҫулне ҫитиччен “Сеятель” хуҫалӑхра водительте вӑй хунӑ. Мӑшӑрӗпе ултӑ ача ҫуратса ура ҫине тӑратнӑ. Ырлӑх-сывлӑх, телей, вӑрӑм кун-ҫул, канлӗ ватлӑх сунатпӑр сире, юратнӑран та юратнӑ аннепе атте.

**Саламлаканӗсем: ывӑлӗсемпе кинӗсем, хӗрӗпе кӗрӳшӗ, мӑнукӗсем, тӑванӗсемпе пускилӗсем.**



Турайра пурӑнакан юратнӑ кинӗме **Елена Алексеевна НИКОЛАЕВАНА** 50 ҫулхи юбилей ячӗпе чун-чӗререн ӑшшӑн саламлатпӑр. Пурнӑҫ ҫулӗпе ӳлӗмрен те ку таранчченхи пекех шанчӑклӑн утмалла пултӑр, эс утас ҫулу такӑр, ӗмӗрӳ вӑрӑм, сывлӑху ҫирӗп, пурнӑҫу яланах тулӑх пулччӑр. Хуйха-суйха, чир-чӗре пӗлмесӗр пурӑнма Турри вӑй-хал парса пытӑр сана.

25 ҫул хушши Турайри хуҫалӑх магазинӗнче тӑрӑшса ӗҫлетӗн, ҫынсен ыйтӑвӗсене туллин тивӗҫтеретӗн, ҫавӑнпа эсӗ ял-йышра та хисепре. Малалла та ҫаплах пултӑрччӗ.

**Пысӑк салампа пӗтӗм тӑванӗсен ячӗпе Хорнуйри Степановсен ҫемйи.**